чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, юпа /октябрь/ 11

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

204 /26610/ №    Хакĕ ирĕклĕ    WWW.hypar.ru

## Уяв ячĕпе!

**Агропромышленноç комплексĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!**

Сире Ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Çак уяв хăйсен ырми-канми ĕçĕпе обществăна чи кирлипе – апат-çимĕçпе – тивĕçтерекенсене пĕрлештерет. Пирĕн хресченсем ĕçчен те тăрăшуллă пулнă май халăха паха тата экологи тĕлĕшĕнчен таса апат-çимĕçпе тивĕçтерeççĕ.

Патшалăхăн аграри отраслĕнчи политикин тĕллевĕ – хуçалăхсен мĕн пур формине пулăшасси, ĕç тухăçлăхне ÿстерессi, тăкаксене чакарасси, ял хуçалăх продукцине тĕплĕ тирпейлессине аталантарасси. Ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансене патшалăх енчен кÿрекен пулăшу калăпăшĕ ÿсрĕ, çакă Чăваш Енĕн агропромышленноç комплексне кăçал лайăх кăтартусем тума май пачĕ. Потребительсен рынокĕнче лайăх ларутăру йĕркеленчĕ, çакă АПК сферинче бизнес тытса пыма, çĕнĕ инвестици проекчĕсене пурнăçлама хавхалантарать.

Ял хуçалăх культурисен акнă пĕтĕмĕшле лаптăкĕ мĕн пур йышши хуçалăхра 9,3 пин гектар пысăкланчĕ, 558,6 пин гектарпа танлашрĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпех пухса кĕртнĕ. 568,8 пин тонна тĕш тырă çапса илнĕ, çакă пĕлтĕрхи кăтартуран 160 пин тонна нумайрах. Пур çĕрте те çĕр улмине пухса пĕтернĕ, унăн ял хуçалăх организацийĕсенчи тата пысăк хресчен /фермер/ хуçалăхĕсенчи пĕтĕмĕшле тухăçĕ 143,4 пин тоннăпа танлашнă – кашни гектартан 163,7 центнер.

Вырăнти продукцин суту-илÿ организацийĕсен сентрисем çинчи ассортиментĕ анлăланать, тÿпи пысăкланать. Апат-çимĕç продукцине чикĕ леш енчен кÿрес енĕпе чарусем йышăнни хамăрăн хресченсене суту-илĕвĕн çĕнĕ рынокĕсене тухма, производство калăпăшне ÿстерме лайăх майсем парать.

Чăваш Енĕн çĕр ĕçченĕсене хамăрăн тăван çĕре юратнăшăн пĕтĕм чунтан тав тăватăп. Уйрăм тав сăмахĕсем – ĕçченлĕхпе çирĕплĕх, юратнă ĕçе парăннин тĕслĕхĕ пулса тăракан ветерансене.

Агропромышленноç комплексĕн мĕн пур ĕçченне çирĕп сывлăх, иксĕлми шанăç, юратнă Чăваш Ен аталанăвĕшĕн тăвакан пархатарлă ĕçре çитĕнÿсем, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

# В.Путин, М.Игнатьев: Ĕçтешлĕх çирĕп!

Шупашкар 2014



Владимир ИВАНОВ сăн ÿкерчĕкĕ

# Форумăн Чăваш Енре юлакан сумлă еткерĕ

***«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форумăн иккĕмĕш кунĕ вĕçленнĕ май РФ спорт министрĕ Виталий Мутко тата ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев журналистсем валли пресс-конференци ирттерчĕç. Шел те, вăхăт хĕсĕккине кура массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсен нумай ыйтăвне хуравлаймарĕç, çапах вĕсен сăмахĕнче форум пĕтĕмлетĕвĕ туллин янăрарĕ темелле.***

Виталий Мутко палăртнă тăрăх – форума массăллă информаци хатĕрĕсен 150 ытла представителĕ çутатнă, хăнасен шучĕ – 3 пин çын ытла. Чăннипех сумлă вĕт. Малашне форума икĕ çулта пĕрре ирттерме йышăннă, вăл спорт аталанăвĕн ыйтăвĕсене, унăн çĕр-шыв пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне сÿтсе явмалли тĕп площадка пулса тăрĕ. Çак кунсенче Чăваш Енре форум программипе килĕшÿллĕн тĕрлĕ 18 мероприяти иртнĕ. Тĕп вырăнта, паллах, Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвĕ.

– Ăна Владимир Путин Президент ертсе пычĕ, ларура спортăн истори шайĕнчи тапхăрне пĕтĕмлетрĕмĕр, – терĕ министр. – Çав тапхăр 2006 çултан пуçланчĕ, ун чухне пирвайхи программăна йышăннă, çĕр-шыв спорта таврăнчĕ. Ку тапхăра 2015 çулта вĕçлетпĕр.

Спорт общественноçĕ Чăваш Енре пухăннă май тĕрлĕ ыйтăва тишкернĕ, хакланă, аталану çул-йĕрĕсене палăртнă. Çав шутра – ГТО комплексĕ. Виталий Леонтьевич пытармарĕ: çак комплекс халăхăн пысăк пайĕшĕн норма пулса тăмалла. Çитес çулах пĕтĕм шкулпа аслă вĕренÿ заведенийĕнче ГТО нормативĕсене пурнăçламалла, 2017 çултан тытăнса вара – пĕтĕм çĕр-шывĕпе.

→ 2, 4-5 стр.

# Форумăн Чăваш Енре юлакан сумлă еткерĕ




/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Виталий Мутко форума irttерме Чăваш Ене ăнсăртран суйласа илменнине палăртрĕ. Михаил Игнатьева, республика Правительствине хăнасене тараватлăх йышăннăшăн, йĕркелӳ ĕçне лайăх пурнăçланăшăн тав турĕ. Çапах кунта пухăнас тени чи малтанах Чăваш Енĕн спортпа çыхăннă кăтартăвĕсем лайăххипе сăлтавланнă.

Виталий Леонтьевич кунти лаша спорчĕн манежне уçма хутшăннă та – çакăн çинчен кăмăллăн каласа пачĕ. Лаша спорчĕн шкулĕнче конкур енĕпе çине тăрса ĕçлĕç, вăл вара – спортăн Олимп тĕсĕ. «Унта вĕренекенсем 14-15 çулсенче кăна, анчах мана паллаштарчĕç те – пĕри халех спорт мастерĕн кандидачĕ, теприсен те – 1, 2-мĕш разрядсем!» – тĕлĕнерех каларĕ вăл. Апла тăк Чăваш Енĕн малашне ку енĕпе палăрмалли майсем пулĕç. Виталий Мутко шантарсах каларĕ: маунтинбайк комплексне те, Пăр керменне те туса пĕтерĕпĕр. Чăваш Енре спортăн 12 тĕсне çине тăрсах аталантарнă май вăл çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисен йышĕнче Чăваш Ен яшĕсемпе хĕрĕсем пуласси пирки иккĕленмест.

Шупашкар сумлă спорт ăмăртăвĕсене irttерес енĕпе пысăк опыт пухни пирки те сăмах пулчĕ. Çав шутра – çăмăл атлетика чемпионачĕсем. Кĕçех вара çак енĕпех Европа Кубокĕ irttмелле. «Михаил Васильевича ӳкĕтлерĕм: чемпионатра пирĕн команда çĕнтерессишĕн те эсĕ яваплă пулатăн. Яваплăха ун çине тиесшĕнччĕ. Çук, килĕшмерĕ, ăмăртусене йĕркелесе irttеретпĕр, анчах кăтартусемшĕн хăвăр явап тытăр терĕ», – шӳтлерĕ министр. 16, 18-мĕш çулсенче хăвăрт утакансен чемпионачĕсене irttермелле – каллех Шупашкарта.

Михаил Игнатьев форума Чăваш Енре irttерни республикăшăн пысăк чыс пулнине палăртрĕ, куншăн Владимир Путин Президента, Виталий Мутко министра тав турĕ. Ютран килнĕ журналистсем те чылайăн, çавна май вăл республика çинчен кĕскен каласа пани, паллах, ытлашши пулмарĕ. Халăхăн 36% спортпа туслă, спорт шкулĕсене 31 пин ачапа çамрăк çӳрет. Çакăн витĕмĕ виççĕмĕш çул ĕнтĕ Чăваш Енре ача çуратас енĕпе палăракан ӳсĕмре курăнать, çынсен пурнăç тăршшĕ пысăкланать.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Виталий Мутко çитес çулсенче спорт резервне хатĕрлес енĕпе çине тăрса ĕçлессине палăртрĕ. «Кăтартусем халĕ те япăх мар, пирĕн ачасемпе çамрăксем пур енĕпе те çĕнтереççĕ, пирĕнпе Китай кăна тупăшаять. Апла пулин те ку енĕпе ĕçлемелле те ĕçлемеллеха», – терĕ вăл. Хальлĕхе, сăмахран, шкулсен 30% кăна хăйсен спорт бази пур. Вĕренӳ заведенийĕсем спорт площадкисемпе залĕсене унта та кунта арендăна илсе йывăрлăхран тухни ăна тивĕçтермест. Çавăн пекех кадрсем тĕлĕшпе ыйтусем пур: хăйсен ĕçне пĕлекен, çĕнĕлле ĕçлекен ăста тренерсем кирлĕ. Çакăн валли патшалăх укçа уйăрĕ.

2018 çулта Раççейре irtekен футбол чемпионачĕ пирки каланă май министр ют çĕр-шывсенчен килекен командăсене çирĕм регион йышăнассине пĕлтерчĕ. Пĕр команда Шупашкарта тĕпленĕ. «Хăш командине суйласси пирки сăмах пуçарсан Михаил Васильевича эпĕ голландецсене йышăнма сĕнтĕм – пĕрле туртса яратăр терĕм, – каллех шӳтлерĕ Виталий Леонтьевич. – «Çук, Гана командине йышăнас килет» тет. Паллах, шӳтлетĕп, командăсем хăш регионта пуласси не хăйсем суйласа илĕç».

«Туртса ярассипе» çыхăннă темăна малалла тăснă май министр Чăваш Ен Пуçлăхĕ республикăра шкулсен, социаллă учрежденисен директорĕсене табак туртма пăрахтарни пирки кулкаласа сăмах пуçарчĕ: «Питĕ демократиллĕ...» Апла пулин те унăн сăмахĕнче республика влаçĕн çак утăмне ырлани куç кĕрет сисĕнчĕ.

Журналистсем тĕнче шайĕнчи спорт организацийĕсен йышне Раççей представителĕсене ытларах кĕртме сĕннине те министр шӳтлесе хуравларĕ: «Чапаев» фильма ас тăватăр-и? Петька командир çара ертсе пыма пултарассипе кăсăкланать. «Пултаратăп, анчах чĕлхе пĕлместĕп», – тет Чапаев. Шӳт-ха ĕнтĕ, чăннипе вара çакă та чăрмантарать. Апла пулин те Пĕтĕм тĕнчери фехтовани тата шахмат федерацийĕсен президенчĕсем – пирĕн çынсем, Усмановпа Илюмжинов. МОКăн тăватă членĕ – Раççей çыннисем. Ытти организацире те пирĕн представительсем пур. Анчах кунта ĕçĕ шутĕнче мар, пахалăхра. Тĕнче спорчĕ паян пысăк улшăнусен умĕнче. Сумлă форумсем irtмелле. Пирĕн çав улшăнусене асăрхамасăр юласран сыхланмалла».

Форумран республикăшăн мĕнле еткер юлать? «Эпир мĕн илсе килнĕ – пĕтĕмпех юлать», – пулчĕ хурав. Ку çеç те мар. Виталий Мутко шухăшĕпе – региона çĕр-шыв Президенчĕ килни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эппин, Чăваш Енпе кăсăкланаççĕ. Çакă республикăра пурăнакансен кăмăлне те витĕм кӳрет, хăйсене ытларах хисеплеме пулăшать.

**Николай КОНОВАЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем



# Туслăха çирĕплетнĕшĕн – Туслăх орденĕ



«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум вăхăтĕнче РФ Президенчĕ Владимир Путин пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕсен ертӳçисемпе курнăçнă. Тĕл пулура Владимир Владимирович Пĕтĕм тĕнчери студентсен спорчĕн федерацийĕн президентне, Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн членне Клод-Луи Гальена Туслăх орденĕпе чысланă. Владимир Путин ăна Раççейри ачасемпе çамрăксен спортне аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн, Хусанти Универсиадăна йĕркелеме пулăшнăшăн тав тунă.

Туслăх орденĕпе Раççей тата ют çĕр-шывсен гражданĕсене халăхсен хушшинчи çураçупа туслăха, ĕçтешлĕхе çирĕплетессипе, пĕр-пĕрин культурине çывăхлатса пуянлатассипе çыхăннă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн наградăлаççĕ.

**К.ВОЛКОВ.**

# Олег Бирюков – Çĕнĕ Шупашкар мэрĕ

Çĕнĕ Шупашкарта хула администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне йышăнмалли конкурса пĕтĕмлетнĕ. Унта Чăваш Енĕн пурăнмалли çурт-йĕрĕн тĕп инспекторĕ Олег Бирюков çĕнтернĕ. Кĕçнерни кун Çĕнĕ Шупашкар хулин депутатсен Пухăвĕн депутачĕсем пĕр саслă пулса ăна должноçра çирĕплетнĕ. Çав кунах Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн 133-мĕш указĕпе Олег Борисовича Чăваш Республикин Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн ертӳçин – пурăнмалли çурт-йĕрĕн тĕп инспекторĕн должноçĕнчен хăтарнă.

Химиксен хулин администрацийĕн пуçлăхĕн пуканĕшĕн çавăн пекех çар çынни пулнă Сергей Иванов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Владимир Михайлов тата Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Сергей Осипенко кĕрешнĕ.



Олег Бирюков 1962 çулта Улатăрта çуралнă. 1985 çулта – Мари политехника институтне, 1999 çулта Патшалăх службин Атăл-Вятка академине пĕтернĕ. Клинцовăри телефон аппаратурин заводĕнче конструкторта ĕçлеме пуçланă. Шупашкарти приборсем тăвакан заводăн сборка цехĕн мастерĕ пулнă. Ултă çул Шупашкар хулинчи Калинин районĕн администрацине ертсе пынă. Кăçалхи кăрлачранпа Чăваш Енĕн пурăнмалли çурт-йĕрĕн тĕп инспекторĕнче ĕçленĕ.

**Н.МИРОНОВ.**

## Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн ХУШĂВĔ

**Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм тăваттăмĕш сессине пухасси çинчен**

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм тăваттăмĕш сессине 2014 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче пухас.

10 сехетре пуçланать.

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ю.ПОПОВ.**

* * *

**Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм тăваттăмĕш сессийĕн кун йĕркин проекчĕ**

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм тăваттăмĕш сессийĕнче вунă ытла ыйтăва пăхса тухма палăртнă, çав шутра:

1. Чăваш Республикин «2015 çулта Чăваш Республикинче пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене çирĕплетесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

2. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче хаксене /тарифсене/ патшалăх йĕркелесе пымалли йĕрке çинчен» саккунĕн $2^1$ статйине улшăну кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

3. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курасси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

4. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтересси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

Шупашкар 2014

# Физкультурăпа пысăк спортри пирĕн çитĕнӳсене Раççей çеç мар, тĕнче те хак пачĕ

## Лаша спортне ытларах хĕрсем кăмăллаççĕ

***Ĕнер Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форумăн программипе килĕшӳллĕн Çĕнĕ Шупашкарти лаша спорчĕн шкулĕнче тăраллă манежа савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç. Унта Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ Виталий Мутко, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Бирюков тата ыттисем хутшăнчĕç.***



«Спорта юратакансем валли паха тепĕр объект хута кайрĕ. Лаша спортне суйлакансенчен малашне пысăк çитĕнӳсем кĕтетпĕр. Виталий Муткопа паян эпир спортсменсене лашасемпе ытларах тивĕçтересси пирки калаçрăмăр. Чаплă урхамахсемпе пысăк ăмăртусенче çĕнтерессе, сирĕн хушăртан чемпионсем тухасса шанатпăр. Çитĕнӳ вара лашаран кăна килмест, хăвăрăн та вăй хумалла, кĕлетке-çурăма пиçĕхтермелле. Лашасене юратмалла, вĕсен кăмăлне туйма, сисме вĕренмелле. Лаша спортне суйланă ачасене, çамрăксене, вĕсен ашшĕ-амăшне тав тăватăп, пысăк ăнăçусем сунатăп», – терĕ пухăннисене саламланă май Михаил Игнатьев.

«Хаклă туссем, ĕçтешсем! Сире савăнăçлă çак пулăмпа саламлатăп! Эпĕ сирĕн патăрта икĕ çул каялла пулнăччĕ, ачасем çулталăкĕпех спортăн çак тĕсĕпе тренировкăсем ирттерме пултарччăр тесе тăраллă манеж тума шантарнăччĕ. Савăнăçлă çак пулăма кĕтсе илтĕмĕр паян. Халĕ паха çак шкул Раççейĕн пĕрлештернĕ команди валли кандидатсем хатĕрлеме пуçлĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен кунта 60 ача ытларах пĕлӳ илме тытăнчĕ. Раççейĕн кашни кĕтесĕнчех спортăн тĕрлĕ тĕсне алла илме май пурри савăнтарать. Хитре çак спорта суйланă спортсменсене ăнăçусем сунатăп. Республика Пуçлăхне, Правительствине вара спорта аталантарма нумай вăй хунăшăн тав тăватăп. Эпир пĕрле пысăк çитĕнӳсем тăватпăр. Малашне те çĕнĕ спорт объекчĕсене хута ярăпăр. Республика спорт центрĕ пулса тăрĕ»,– шухăшне палăртрĕ Виталий Мутко. Пысăк хăнасене лаша спорт шкулĕнче вĕренекенсем, паллă спортсменсем /разрядниксем/ хăйсен пултарулăхĕпе, ăсталăхĕпе паллаштарчĕç. Ун хыççăн хăнасем спорт шкулĕнчи тренировкăсем ирттермелли пӳлĕмсене, ут хатĕрĕсем сутакан лавккана кĕрсе курчĕç.

«Эпир Шупашкартан Çĕнĕ Шупашкара 2011 çулта куçса килтĕмĕр. Малтанах лашасене усрамалли 3 вите хута янăччĕ. Кăçал вара администраци çуртне тата манеж туса пĕтертĕмĕр. Шкулта халĕ 21 çын ĕçлет. Эпир республикăри кăна мар, тĕрлĕ регионта иртекен ăмăртусене хутшăнатпăр. Вĕсенчен ялан çĕнтерӳпе таврăнатпăр. Паян пирĕн шкулта пурĕ 54 лаша. Пирĕн патăмăра ачасем 10 çултан çӳреме пуçлаççĕ. Пултаруллăраххисене хушăран 9 çултанах илетпĕр. Кунта вĕсем 18 çул тултариччен тӳлевсĕрех вĕренеççĕ. Паянхи куна спорт шкулĕнче 169 ача ăсталăха туптать. Вĕсем Çĕнĕ Шупашкартан кăна мар, Шупашкартан та, Шупашкар районĕнчен те килсе çӳреççĕ. Пытармастăп: лаша спортне ытларах хĕр ачасем кăмăллаççĕ. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан, лашана юратакан аслă ăрури çынсем валли ятарлă ушкăн тунă. Вĕсене эрнере икĕ хут ут утланса ярăнма ирĕк паратпăр»,– паллаштарчĕ лаша спорт шкулĕн директорĕ Валерий Краснов. Эпир те спортăн илемлĕ çак тĕсне суйланă хĕр-упраçпа яшкĕрĕме ăнăçу, çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**Роза ВЛАСОВА.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

## «Çăлтăрлă çул»

***Шупашкарти «Спартак» комплексăн «Çĕнĕ ăру» пăр катокĕнче конькипе эрешлесе ярăнакан ачасемпе çамрăксем валли СССР тата Раççей тава тивĕçлĕ тренерĕ Виктор Кудрявцев тата Лиллехаммерта 1994 çулта иртнĕ Олимпиада чемпионĕ Алексей Урманов «Çăлтăрлă çул» программăпа килĕшӳллĕн икĕ кун ăсталăх класĕсем ирттерчĕç.***



"Çăлтăрлă çул" программăна пирĕн çĕр-шывра 2011 çулта пурнăçа кĕртме пуçланă. Çак тапхăрта унта Раççей Федерацийĕн пĕтĕм округĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенче ăсталăхне туптакансем хутшăнса курнă. "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум вăхăтĕнче çĕршыври паллă тренерсем ăсталăх класĕсем йĕркелессине, хăйсен çитĕнӳ вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарассине пĕлсен Шупашкарта пăр çинче конькипе эрешлесе ярăнакансем те, вĕсен ашшĕ-амăшĕ те питĕ савăннă. Акă икĕ Полина – Плехановăпа Бахтина – заняти пуçланиччен чылай маларах çитсе тăнă. Ир-ирех тăрса ĕçе пуçăнасси пачах хăратмасть вĕсене: хĕр ачасем эрнере темиçе хут 6 сехет тĕлне тренировкăна килеççĕ-çке. 1,5 сехет ярăннă хыççăн шкула васкаççĕ. Полинăсем паллă тренерпа Олимп чемпионĕ ирттерекен ăсталăх класĕсене лекнĕрен телейлĕ. 1-мĕш класра ăс пухакан Антонина Пастухова ӳсĕмне кура /занятисене 2006 çулта çуралнисем тата аслăраххисем валли ирттерчĕç/ паллă çынсемпе юнашар ярăнаймарĕ, çапах вĕсем кăтартакан хăнăхтарусене, асăрхаттарусемпе сĕнӳсене питĕ тимлĕн сăнарĕ тата итлерĕ. Амăшĕ Марина тренерсем мĕн каланине видеопа ӳкерчĕ. Хĕрарăм хăй те конькипе ярăнма юратать, çамрăксен III разрядне хӳтĕленĕ хĕрне май килнĕ таран пулăшма тăрăшать. «Виктор Кудрявцевпа Алексей Урмановăн кашни сăмахне тимлĕн итлерĕм, çĕннине нумай пĕлтĕм. Çакă маншăн хамшăн та кăсăклă», – терĕ Марина Пастухова.

Кĕçех 77 çул тултаракан Виктор Николаевич çулĕсене кура мар йăрă: халĕ те конькинчен уйрăлмасть, хусканусене техникăпа килĕшӳллĕн мĕнле тумаллине ăнлантарать, хăш-пĕр элемента хăй те кăтартать. Мĕн чухлĕ паллă спортсмен ăсталăхне ун патĕнче ӳстерменши? Тĕнчен пĕрремĕш чемпионне Сергей Волкова шăпах вăл çитĕнӳ çулĕ çине тăма пулăшнă. Алексей Урманов та хĕр ачасене чылай хускану вĕрентрĕ, пăр çинче эрешлесе ярăнакансен тăтăш тĕл пулакан йăнăшĕсенчен мĕнле хăтăлмаллине ăнлантарчĕ. «Пĕтĕмĕшле илсен ку ачасем япăх мар ярăнаççĕ, эппин, вĕсен тренерĕсем тĕрĕс çулпа пыраççĕ. Чăн та, техника тĕлĕшĕпе хăш-пĕр асăрхаттару пур. Хальхи вăхăтра Раççейĕн чылай регионĕнче пăр катокĕсем уçăлаççĕ, вĕсенче çамрăк фигуристсене хатĕрлемелли тытăм майĕпен вăй илме пуçлать – вăл Совет Союзĕн вăхăтĕнченпе çухалма тытăннăччĕ. Эпир халĕ ăсталăх класĕ ирттерекен пăр катокĕ «Çĕнĕ ăру» ятлă, манăн шухăшăмпа, çак ят хăйĕн пĕлтерĕшне туллин уçса парать», – терĕ Алексей.

Виктор Кудрявцев çулталăкĕпех ĕçлекен пăр катокĕ пурри республикăшăн лайăх пулнине, çапах спортăн çак тĕсĕ аталанса вăй илтĕр тесен тата нумай ĕçлемеллине палăртрĕ: «Пĕр хавхаланупа çеç малалла каяймăн, çавăнпа тренерсен канашне туса хумалла, унта команда кирлĕ. Ачасемпе харăсах темиçе тренерăн, хореографăн ĕçлемелле. Унсăр пуçне секципе çеç çырлахмалла мар, эрешлесе ярăнас енĕпе хальхи йышши шкул кирлĕ. Спортăн çак тĕсне кăмăллакансене тест витĕр кăларса чи лайăххисене суйласа илмелле».

В.Кудрявцев та, А.Урманов та Чăваш Енре – пĕрремĕш хут. Вĕсем иккĕшĕ те кунта хăйсене питĕ килĕшнине пĕлтерчĕç.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

### ХĂНАСЕН ШУХĂШĔ



**Павел КОЛОБКОВ, Раççей спорт министрĕн çумĕ, фехтовани енĕпе Олимп чемпионĕ:** "Халĕ "Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр" физкультурăпа спорт комплексне чĕртсе тăратас ĕç çĕр-шывĕпех пырать. Паллах, ку енĕпе Чăваш Ен – лидерсенчен пĕри. Икĕ эрне каялла республикăн тĕп хулинче 200 яхăн ĕç коллективĕ нормативсене пурнăçланă, ку процеса пин ытла çын хутшăннă. Çавăнпа ГТО нормативĕсене йышăнмалли пĕрлехи куна Чăваш Енре ирттерни ăнсăртран мар. 4-ран пуçласа 8 норматив таран ăнăçлă тултарнисене çывăх вăхăтрах ГТО паллисене парăпăр. ГТО комплекс кĕçех физвоспитанин çĕнĕ тытăмĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулса тăрасса шанатăп”.



**Александр КАРЕЛИН, Раççей Геройĕ, виçĕ хут Олимп чемпионĕ, кĕрешӳçĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ:** "Чăваш Енре пултаруллă та уçă кăмăллă çынсем. Муниципалитетра çакăн пек спорт комплексĕ пулни питĕ аван. Пăр керменĕ те, Çĕнĕ Шупашкарти спорт шкулĕ те лайăх лару-тăрура, ăна федераци программипе килĕшӳллĕн тĕпрен юсаса çĕнетнĕ. Хула питĕ илемлĕ, çынсем те хитре. Унсăр пуçне вĕсем спортпа туслине те шанас килет”.



**Николай ВАЛУЕВ, Раççей боксерĕ, тĕнче чемпионĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ:** "Чăваш Енре ГТО нормативĕсене пурнăçлакансен уявĕнче эпĕ пĕтĕм ӳсĕм категорине куртăм: çамрăксене те, аслăрах çулти çынсене те. Çакă питĕ савăнтарать, хавхалантарать, мĕншĕн тесен Раççей чăнласах та спорт çĕр-шывĕ. "Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр” комплекса чĕртсе тăратса эпир манăçа тухма пуçланине тепĕр хут аса илетпĕр. Ку комплекс вăя тĕрĕслесе пăхнипе пĕрлех хамăра шанаслăха та ӳстерет".



**Виктор КУДРЯВЦЕВ, СССР тата Раççей тава тивĕçлĕ тренерĕ /пăр çинче конькипе эрешлесе ярăнас енĕпе/:** "Шупашкарта çулталăкĕпех ĕçлекен пăр катокĕ пурри лайăх, çапах кунта конькипе эрешлесе ярăнасси вăйлă аталанман-ха. Секци уçнипе çеç çырлахмалла мар, хальхи йышши шкул кирлĕ. Чăваш Енре эпĕ пĕрремĕш хут. Кунта мана йăлтах килĕшрĕ. Шупашкар таса та симĕс хула. Хамăн сăн ӳкерчĕке республикăра тухса тăракан хаçатра курсан тĕлĕнсех кайрăм!"



**Алексей УРМАНОВ, пăр çинче конькипе эрешлесе ярăнас енĕпе Олимп чемпионĕ:** "Шупашкарти "Çĕнĕ ăру" пăр катокĕнче ăсталăхне туптакан ачасем япăх мар ярăнаççĕ, эппин, вĕсен тренерĕсем тĕрĕс çулпа пыраççĕ. Пăр катокĕн ячĕ те хăйĕн пĕлтерĕшне туллин уçса парать. Манăн шухăшăмпа – Чăваш Ен спортăн çак енĕпе те Олимп чемпионĕсене "çитĕнтерме" пултарать. Сирĕн республикăра халĕччен пулса курманччĕ. Ĕнер Шупашкар тăрăх çӳрерĕм. Ас тăвăм çулăмĕ патĕнче чарăнтăм, панорамăпа килентĕм – питĕ хитре!"



**Светлана ЖУРОВА, Олимп чемпионки, РФ Патшалăх Думин депутачĕ:** «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум чăннипех хавхалану кӳрет. Пĕр енчен вăл – илĕртӳллĕ уяв, çав вăхăтрах – пĕрлехи ĕç лапамĕ те. Анчах халĕччен çакнашкал мероприятисенче эпир спорт тытăмĕн шалти ыйтăвĕсене сӳтсе яваттăмăр тăк ку хутĕнче риторика улшăнчĕ. Уçă калаçусем ытларах пулни сисĕнет. Çапла пулмалла та. Спорта нумайăшĕ политика тесе хаклать пулин те вăл унăн айккинчи тытăм. Хайхи форум евĕр мероприятисем вара тăнăçлăхшăн кар тăма йыхравлаççĕ».

## Çĕнтерӳ никĕсĕ – кăмăл çирĕплĕхĕ, чăтăмлăх

***Сусăр тени çынна чирлисен шутне кĕртмеллине пĕлтермест. Ӳт-пӳре çитменлĕх пурри вĕсене спортра çитĕнӳ тума чăрмантармасть. Çакна инвалид спортсменсем Лондонри Паралимп вăййисенче те çирĕплетсе пачĕç. Вĕсен йышĕнче чăваш хĕрĕ Елена Иванова та пулнăччĕ.***



"Пирĕнтен никам та медаль ыйтмасть, малти вырăнсене йышăнма хистемеççĕ. Апла пулин те тĕллев паллă: çĕнтерӳ!", – терĕ Паралимп вăййисен чемпионки, Раççей Паралимп комитечĕн ĕçтăвкомĕн членĕ Ольга Семенова Шупашкарти В.Егорова ячĕллĕ 1-мĕш спорт шкулта адаптаци спорчĕн ăсталăх класне уçнă май. "Раççейĕн пĕрлештернĕ команди валли адаптаци спорчĕ енĕпе спортсменсене хатĕрлесси" темăна çутатакан мероприятие Чăваш Енри тата РФ субъекчĕсенчен килнĕ тренерсем, спортсмен-инструкторсем хутшăнчĕç.

Паралимп вăййисен тӳпине çĕкленесси – кашни спортсменăн чи çутă ĕмĕчĕ. Ольга Владимировна палăртнă тăрăх – хальхи вăхăтра Раççей спортсменĕсем 2016 çулхи авăнăн 7-18-мĕшĕнче Рио-де Жанейро хулинче иртекен XV Паралимп вăййисене хĕрсех хатĕрленеççĕ. "Пирĕн команда спортăн 20 тĕсĕпе хутшăнать. Спортсменсем байдаркăпа тата каноэпе ишессинче, триатлонта пĕрремĕш хут ăмăртĕç", – пĕлтерчĕ О.Семенова.

Сусăрсем çавăн пекех спортăн пур тĕсне те алла илейменççĕ. Ольга Семенова каланă тăрăх – хальхи вăхăтра çăмăл атлетикăна, велоспорта, йĕлтĕрпе ярăнассине ытларах аталантараççĕ. Ытти енсене вăйлатма тренерсем хатĕр мар е вĕсем вуçех çук, спорт инвентарĕсемпе кăткăслăх чылай, пурлăх никĕсĕ хавшак...

Раççей тава тивĕçлĕ тренерĕ Андрей Михайлов япăх куракан, ДЦП сиенленĕ тата урисене татнă, ларса йĕлтĕрпе ярăнакансен йĕлтĕр тата биатлон ăмăртăвĕсене йĕркелесе ирттерни çинчен каласа кăтартрĕ. Кунта пачах урăхла йăла-йĕрке. Финиша пĕрремĕш çитни çĕнтерӳçĕ пулнине пĕлтермест. Пĕрремĕш вырăна çын мĕн таран сусăрланнине кăтартакан процента вăхăт çине хутласа пулнă хисеп тăрăх палăртаççĕ. Суккăрсем чупакан трасса та хăйне евĕрлĕ: чăнкă тăвайккисĕр, çырма-çатрасăр... Вĕсене гид çул кăтартса пырать.

Алăсăр спортсмен пăшалтан епле перет-ха? "Çĕнтерӳ патне талпăнни май çуккине те май килтерет, – терĕ Андрей Анатольевич. – Акă пĕр спортсменка татăк алли çумне çекĕл çирĕплетнĕччĕ". Пăшалĕсене ятарлă çынсем хатĕрлесе хурса параççĕ. Суккăрсем питĕ тĕл пенине палăртрĕ А.Михайлов. Вĕсем наушник тăхăнаççĕ иккен. Пăшала мишеньваррине тĕллесе çитсен хăлхари сасă вăйланать. "Шăп çав вăхăтра персе ĕлкĕрмелле, – тет тренер. – Пĕррехинче çапла майпа хам та персе пăхрăм. Мишене куçпа пăталатăп, хăлхара тĕллесе çитерни-не систерет... Çапах та лектерейменерĕм. Суккăрсем сисĕмлĕрех, туйăмлăрах”.

Чăнах та, кăмăл çирĕплĕхĕ, чăтăмлăх алă-урасăр, куççăр, хăлхасăр çынсене йывăрлăхсене парăнтарса пысăк çитĕнӳсем патне çул хывма пулăшать.

**Валентина БАГАДЕРОВА**

КОНФЕРЕНЦИ

## Кашниех тĕллевĕ патне ăнтăлтăр

***Ĕнер Шупашкарта ГТО комплексне аталантарас тата спорт резервне хатĕрлес ыйтупа икĕ пысăк конференци ĕçлерĕ. Конференцие РФ спорт министрĕ Виталий Муткопа Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕç.***

Правительство çуртĕнче иртнĕ конференцире Пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт комплексне кашни регионта пурнăçа кĕртесси çинчен калаçрĕç, пурнăçламалли ĕçсене тата малашнехи тĕллевсене палăртрĕç. Виталий Мутко та ГТО комплексĕ паянхи Раççейшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине каларĕ. «Совет саманинче кашни çын спортпа туслă пулнă, сывă пурнăç йĕркине пăхăннă, ГТО нормативĕсене пурнăçласси ырă йăласен йышĕнчеччĕ. Анчах та 1990 çулсен пуçламăшĕнче ахăр самана пуçлансан спорт çине те алă сулчĕç. 2006 çулта кăна çĕр-шыв аталанăвĕшĕн физкультурăпа спорт питĕ кирлине ăнланса илчĕç, вăл социаллă политикăн приоритетлă енсенчен пĕри пулса тăчĕ. Ун чухне федерацин «Раççей Федерацийĕнче 2006-2015 çулсенче физкультурăпа спорта аталантарасси» тĕллевлĕ программи кун çути курчĕ, каярах стратегине туса хатĕрлерĕмĕр. Вĕсемех физкультурăпа спорта вăй илме пулăшрĕç. Хальхи вăхăтра пысăк çитĕнӳсен спорчĕ пĕлтерĕшли пулин те массăллă спорта та çул памалла. Вăл çамрăксемпе ачасене спорта явăçтарма май парĕ, олимпçăсем пек çĕнтерӳ патне ăнтăлма хавхалантарĕ», – терĕ Виталий Леонтьевич.

Тухса калаçакансем те хăйсен опычĕпе, ĕмĕт-шухăшĕпе паллаштарчĕç. Акă, тĕслĕхрен, Спорт проекчĕсен йĕркелӳ дирекцийĕн гендиректорĕ Азат Кадыров ГТО паллисемпе логотипĕсене хатĕрлесси, нормативсен тытăмне палăртасси, кадрсене вĕрентесси çинчен доклад турĕ. РФ спорт министрĕ ГТО комплексне аталантарас енĕпе ĕçлекен экспертсен канашĕн председательне Владимир Уварова, «Дитрих» пĕрлешӳ ертӳçине Кирилл Зайцева тата ыттисене те тимлĕ итлерĕ. Унтан сумлă хăна Шупашкарти ачасен пултарулăхĕн çуртĕнче иртнĕ конференци ĕçне хутшăнчĕ.

Унта спорт резервне хатĕрлес енĕпе явапллă çынсем пухăннă. Тĕп докладпа РФ спорт министрĕн çумĕ Юрий Нагорных паллаштарчĕ. «Спорт резервĕ – пирĕн отрасльти питĕ пĕлтерĕшлĕ енсенчен пĕри. Унсăрăн пысăк çитĕнӳсемпе палăракан спортсменсене хатĕрлеме йывăр. Çавăнпа та кашни регионăн çак ыйту çине тимлĕ пăхмалла», – пĕлтерчĕ Юрий Дмитриевич. Çавăн пекех вăл спорт резервне хатĕрлес тытăма çĕнетмеллине палăртрĕ, паянхи кун тĕлне ку енĕпе мĕнле ĕçсем тунине каласа кăтартрĕ. Виталий Мутко та çĕнни нумай сĕнчĕ. «Спорт шкулне пыракан ачана тӳрех пысăк çитĕнӳ патне хăваламалла мар. Вăл пĕчĕк-пĕчĕк утăмсем туса çĕнтерӳ картлашкипе хăпартăр. Çавăнпа вĕренӳ учрежденине пуçламăш класра вĕреннĕ чухнех илмелле. Ку енĕпе хальхи йышши çĕнĕ керменсем пысăк вырăн йышăнмалла, Чăваш Енри пек вĕсене спорт шкулĕсемпе пĕрлештермелле. Калăпăр, бассейнсемпе тивĕçтертĕмĕр пулсан ишевçĕсен турнирĕсене йĕркелени вырăнлă. Çакă та çамрăксене спортпа туслаштарать», – терĕ вăл.

Конференцире Олимп резервĕсен училищисемпе ятарлă спорт шкулĕсен, спорт хатĕрлевĕн центрĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, ăмăртусене ирттересси, тренерсене хавхалантарасси çинчен те калаçрĕç.

**Андрей МИХАЙЛОВ**



**БЕТОН всех марок**
**(М-200 - 2800 руб./куб.)**
**РАСТВОР**
**ОПГС**
**КЕРАМБЛОКИ**
**(КБ-20 - 33 руб./шт)**
**доставка**
**тел.: 29-25-34, 29-24-88**




## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**416. Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**456.Услуги КамАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

**459.Установка заборов,** ворот, винтовых свай. Т. 89176500640.

**460.Обшивка домов** сайдингом, утепление. Т. 8-902-287-27-77.

**513.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**590.Удаление вмятин, полировка, химчистка,** шумоизоляция, карбон. Т. 36-22-88.

**652.Акция! Эко парковка** /травница/ от 460 р. км. м. Т. 8 /8352/ 29-52-25.

**661.Натяжные потолки.** Т. 21-69-93.

**688.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. Т. 89033220479.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.

**636.ТРЕБУЮТСЯ** в Новочебоксарск **операторы ТПА** /обучение без отрыва от производства, з/п сдельная, график работы 2/2/. Т/ф: 73-03-08, 74-11-81.

**645.**Организации требуются **повара, кухонные** рабочие, **упаковщики, грузчики.** Для работы в Москве и МО. Вахта. З/п от 25000 руб. Проживание, питание за счет организации. Т. 8-926-653-72-84, Дмитрий.

## СУТАТĂП

**672.КАЧАКА.** Т. 8-919-660-51-11.

**РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ**
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**33.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-905-346-56-71.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные –** некондиция за полцены. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**46.ПЛИТЫ** тротуарные, **БРУСЧАТКУ.** Дёшево. Т. 8-967-470-68-19.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**172.ГРАВМАССУ, КЕРАМБЛОК, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**317.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит,** кольца. Т. 89278629166.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. **Т. 8-917-677-68-46.**

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**632.Стельную первотёлку в Чебоксарском р-не.** Т. 8-937-371-70-90.

**653.ЗАБОРЫ** железобетонные декоративные. **Тел. 8 /8352/ 29-52-25.**

**654.Керамблоки 20х20х40** от производителя. Д-ка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**655.Кольца колодезные** – диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**680.Кольца** – 0,7; 1,0; 1,5. Т. 8-903-065-40-56.

**682.Пиломатериал** любой от производителя, **крепежные** изд., **утеплители, гидропароизоляция.** Доставка. НДС. Т. 37-69-01.

**685.ТРОТУАРНУЮ ПЛИТКУ, брусчатку** – дёшево. Распродажа. Доставка. Укладка. Т. 89033220479.

**686.Песок, щебень, гравмассу;** вывоз мусора. Т. 89033220479.

**687.Профнастил, металлочерепицу, водостоки.** Скидки. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.89603109878.

**433.КОРОВ.** Т. 89278508564.

**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судйин статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи судьясен квалификаци коллегийĕ Чăваш Республикинчи Куславкка районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин вакантлă должноçĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.**

**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕн судйин статусĕ çинчен» саккунĕн 5-мĕш статйин 6-мĕш пунктĕнче кăтартнă документсене тата ыйтса çырнине 2014 çулхи чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен, 13 сехетрен пуçласа 17 сехетчен, чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 302 пӳлĕм.**

**Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта пăхса тухассине претендентсене ятарлă йĕркепе пĕлтереççĕ.**

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление многоконтурного земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:340308:411 площадью 87490 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении продлить на 10 лет срок аренды земельного участка площадью 150 кв. метров с кадастровым номером 21:21:160131:251, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Кугесьское сельское поселение, пос.Кугеси, ул.Первомайская (земли населенных пунктов), для установки торгового павильона "Гавань". Заявления и письменные возражения принимаются по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, каб.№20, тел.(83540)2-40-82.

Администрация Сыресинского сельского поселения Порецкого района Чувашской республики информирует сельскохозяйственные организации и крестьянско-фермерские хозяйства, обрабатывающие эти участки о возможности приобретения нижеперечисленных земельных участков выделенных в счет невостребованных долей общей площадью 7 592 400 кв.м. с кадастровыми номерами:
21:18:000000:7584, площадью 766 000 кв.м.; 21:18:090101:522, площадью 1 534 000 кв.м; 21:18:090101:519, площадью 390 000 кв.м.; 21:18:090201:164, площадью 766 000 кв.м.; 21:18:090101:525, площадью 229 800 кв.м.; 21:18:090101:520, площадью 191 500 кв.м.; 21:18:090101:517, площадью 306 400 кв.м.; 21:18:090201:165, площадью 459 600 кв.м.; 21:18:090201:166, площадью 995 800 кв.м.; 21:18:090101:524, площадью 114 900 кв.м.; 21:18:090101:523, площадью 229 800 кв.м.; 21:18:090101:515, площадью 842 600 кв.м.; 21:18:090101:521, площадью 459 600 кв.м.; 21:18:090101:516, площадью 191 500 кв.м.; 21:18:090101:518, площадью 114 900 кв.м., расположенные по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Сыресинское сельское поселение в собственность при выкупной цене такого участка не выше 15% от кадастровой стоимости или в аренду при арендной плате, не превышающей 0,3% от ее кадастровой стоимости.

Заявки и предложения принимаются в течение 6 месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, село Сыреси , улица Октябрьская, дом 185.

В соответствии с постановлением администрации Шемуршинского района от 06.10.2014г. №339 отдел экономики администрации Шемуршинского района сообщает о проведении аукциона 14.11.2014 года в 10.30 ч., который состоится по адресу: с. Шемурша, ул. Советская, д. 8, в здании администрации, каб. 24.

По продаже права на заключение договора аренды земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером: **Лот №1** - 21:22:070301:232, площадью 190000 кв.м., для сельскохозяйственного производства, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Малобуяновское сельское поселение, начальная стоимость годового размера арендной платы 7600 руб., сроком аренды 10 лет.

Заявки на участие в аукционе принимаются с 11.10.2014 по 09.11.2014 года. Рассмотрение заявок на участие в аукционе состоится 12.11.2014 года в 14.00. Регистрация участников аукциона проводится 14.11.2014 года с 9.45 до 10.00 часов.

Шаг аукциона составляет 5% от начальной цены, размер вносимого задатка 20% от начальной цены. Телефон для справок: 2-32-40. Более подробную информацию можно найти на официальном сайте администрации Шемуршинского района сайте torgi.gov.ru

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ 2002-2012 çулсенче Раççей Федерацийĕн Тĕп банкĕн Чăваш Республикин Наци банкĕн председателĕнче ĕçленĕ

**Анатолий Васильевич**
**УХОВ**

вилнĕ пирки хурланса пĕлтереççĕ.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ĕçлекенсем ăслăлăх аслă ĕçтешĕн Э.Е.Лебедевăн

**хуньăшĕ**

сарăмсăр вилнĕ пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

# Пултарулăхпа та паллашаççĕ

Шупашкар 2014



*Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум йĕркелӳçисем унта хутшăнакансен канăвĕ пирки те манман. Чăваш Ен тĕп хулинче вĕсем валли анлă культура программи хатĕрленĕ.*

Форум иртнĕ кунсенче Наци музейĕнче, Хальхи вăхăтри искусствăн центрĕнче, Чăваш патшалăх филармонийĕнче, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче, Çар мухтавĕн музейĕнче культура мероприятийĕсем хатĕрленĕ.

Хăнасене тĕп хулари паллă вырăнсемпе паллаштарнă, çавна май тăвата экскурси йĕркеленĕ. Вĕсенчен пĕри В.И.Чапаев музейĕ пулнă. Кунта вара хальхи вăхăтра Пĕрремĕш тĕнче вăрçине халалланă пысăк курав ĕçлет.

Наци музейĕнче Раççей патшалăх хальхи вăхăтри истори музейĕн ĕçченĕсем тивĕçтернĕ "Пирĕн Крым" сăн ӳкерчĕксен куравĕ валли вырăн уйăрнă. Унпа тата ытти куравпа, çавăн пекех музейпа та, сăмахран, РФ субъекчĕсен ĕç тăвакан влаçĕсен физкультурăпа спорт подразделенийĕсен юридици ертӳçисем валли йĕркеленĕ шкул-практикумне хутшăннисем паллашнă.

Шупашкар хăнисем Чăваш патшалăх оперăпа балет театрне Петр Чайковскин "Лебединое озеро" балетне пырса курнă. Паян вара кунта вĕсене тĕнчипе паллă "Флория Тоска" /Джаконо Пуччини/ оперăна кĕтеççĕ.

**Н.ГЕОРГИЕВА**

# Лăпкăлăхран вăратрĕ

*К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çине çак кунсенче Сергей Найденовăн "Дети Ванюшина" пьесипе лартнă "Ашшĕн ачисем" икĕ пайлă драма тухрĕ. Режиссерĕ – ЧР Патшалăх çамрăксен премийĕн лауреачĕ, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Валерий Карпов.*

Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче, тĕрĕсрех – 1901 çулта – кун çути курнă хайлав çамрăк режиссера мĕнпе илĕртнĕ-ши? Çапла шухăшлатăп: кирек хăçан та, кирек мĕнле ĕмĕрте те ашшĕсемпе ачисен хушшинчи хутшăну ансат пулман. Аслисем, пурнăç тутине туйса курнăскерсем, тĕпренчĕкĕсенчен пур енĕпе те уйрăларах тăраççĕ. "Пĕр пăт тăвар çинисен" кун-çул опычĕ пысăк, çавăнпа çăмăлттай шухăшлă çамрăксене наччасрах ăс пама васкаççĕ. Çакă вара "симĕссисене" тарăхтарсах ярать, вĕсем-çке – "ухмах мар, тем тума та пултараççĕ", вĕрентме юрамасть!

Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев куçарнă, Чăваш халăх художникĕ Юрий Матросов илемлетнĕ ĕçре те икĕ ăру хушшинчи хирĕç тăру хуçаланать.

Ванюшин килĕ пур енĕпе те кирек кама та тивĕçтермелле: тирпейлĕ, хăтлă, çемье пĕр сĕтел хушшинче апатланать. Пĕр сăмахпа – телейлĕ темелле пек. Анчах кунти пулăмсем урăххине çирĕплетеççĕ: кашнин чунĕ арканнă.



Ванюшин купса /РФ тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артисчĕ Геннадий Большаков/, нухрат чирĕпе анранăскер, ачисем пирки те, чунлăхпа йĕркеллĕ хутшăну çинчен маннă темелле. Тем самантра хăйĕн йăнăшне туйса илет: ывăлхĕрĕн шухăш-кăмăлне ăнланмашкăн, чĕрисем патне çул тупмашкăн ăнтăлать. Анчах кая юлнă иккен. Вăл ăçти-çук çын мар: ăс та, чун хăвачĕ те пур унăн. Мĕн çитмест? Чун канлĕхĕ. Пурнăç парнеленĕ пĕр ачипе те /ӳстернĕ, воспитани панă.../ чĕлхе тупаймасть. Мĕн пулса иртнĕ, мĕн тумалла? Çăлăнăç ăçта? Пуçа мĕн чухлĕ ватсан та уççи-хуппине курмасть. Уçăмлăх вырăнĕнче – пăтрашăну, тĕпсĕр авăр. Мĕн пулăшĕ? Вилĕм.

Ачисем те нушаланаççĕ. Акă Людмила канăçне çухатнă. Ĕçкĕç упăшкине пăрахса килне таврăнать, унтан каллех унпа тухса каять. Сусăр Клавдия та çемьере хăйĕн вырăнне тупаймасăр пӳлĕмрен пӳлĕме çӳрет. Константин та тулхăрашать, малалла вĕренейменнинче ашшĕне айăплама именмест /ăна пулăшас тĕллевпе суту-илӳпе аппаланма тивнĕ тесшĕн. Тĕрĕссипе, тĕп сăлтавĕ – укçана хапсăнни/. Ванюшинăн кĕçĕн ывăлĕ Алексей çеç, тĕрлĕ пăтăрмаха тӳссе ирттернĕскер, пурнăç тĕллевне тупассăн туйăнать: килтен тухса кайса Питĕрте тымар ярать.

Спектакль кăмăл-сипет пахалăхĕсене шута хума, ашшĕ-амăшĕпе ачисен хушшинчи хутшăнусенче тимлĕ пулма хистет. Ку енĕпе режиссер хăйĕн тĕллевне пурнăçланă: иккĕленместĕп, спектакль пур куракана та шухăша яратех. Вăл пирĕн лăпкăлăха хăнăхнă чунсене çĕнĕрен хускатрĕ.

**Надежда СМИРНОВА**

# Гороскоп

## Юпа, 13-19

**Сурăх.** Çемьеленнисене çăлтăрсем килти лару-тăрăва хăйсем çине илме сĕнеççĕ. Хĕрпе каччăлла çӳрекенсен те юратăва упраса хăварас тесен самай тăрăшмалла. Ĕçре те лăпкă мар. Ят-сум ан çухалтăр, пуçлăх сирĕн пирки япăх ан шухăшлатăр тесен калаçнă чухне чĕрре ан кĕрĕр. Çав вăхăтрах ĕçтешĕрсен тивĕçĕсене хăвăр çине илме те ан палăртăр.

**Вăкăр.** Ĕçре çитĕнӳ тума тăрăшăр. Тĕл пулуран тĕл пулăваваскăр, пухусене хутшăнса çынсен умне тухса калаçăр. Çапах çăлтăрсен пĕр асăрхаттару пур: сăмах илсен хăвăр çинчен мар, ĕç пирки ытларах каласа кăтартăр. Юратнă çыннăр тĕл пулăва йыхравлĕ, кафе-ресторана илсе кайĕ – çакна тивĕçлипе хаклăр. Канмалли кунсенче унпа харкашасран сыхланăр.

**Йĕкĕреш.** Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен лару-тăрăва лайăхлатас тесен чун ыйтнине кăна пурнăçа кĕртĕр. Мăшăрăра /савнийĕре/ савăнтарасшăн-и? Тархасшăн, йăлтах сирĕнтен килет. Ĕçре хутшăнусем аван мар-и? Лару-тăрăва темĕнле улăштарас тесен те ку тапхăрта çăвара шыв сыпса шăп ларнине нимĕн те çитмĕ. Юн пусăмĕ хăпарнипе нушаланакансен çак сĕнĕве шута илмеллех – чир амаланас хăрушлăх пур.

**Рак.** Чи пысăк асăрхаттару: ку эрнере кивçене кĕрсе ӳкесрен сыхланăр. Унсăрăн парăма часах татаймастăр. Çак кунсенче ĕçре пуçаруллăрах пулăр, ăсталăхăра туллин кăтартма май тупăр. Хуçа çакна асăрхаса ырлĕ кăна мар, премипе хавхалантарма хушу та алă пусĕ. Сире каччă /хĕр/ килĕшет-и? Кун пирки хăйне калама ан васкăр – ӳкĕнме тивĕ.

**Арăслан.** Пуçлăх ушкăнпа пурнăçлама хушнă ĕçе хăвăр çине ан илĕр, ăна вĕçлеме çăмăл пулмĕ – хуçана тарăхтаратăр çеç. «Пĕр пуç – лайăх, иккĕ – тата лайăхрах», – тесе халăхра ахаль калаççĕ-им? Юрату хутшăнăвĕсенче те пуç пулма ан васкăр. Кăмăл тăтăш улшăннипе эрне вĕçĕнче пуç ыратас хăрушлăх пысăкланĕ.

**Хĕр.** Ĕмĕтĕрсем пирки ĕçтешĕрсене кăна мар, питĕ лайăх пĕлекен, шанакан юлташăра та каласа ан кăтартăр. Çăлтăрсем систернĕ тăрăх – вăл çакăнпа хăйне кирлĕ пек усă курма пултарĕ. Палăртса хунине никама каламасăр, ытлашши хыпаланмасăр пурнăçлăр. Чун варлине юратнине те сăмахпа мар, ĕçпе ĕнентерĕр.

**Тараса.** Ĕçре хăвăрăн рейтинга палăрмаллах ӳстерме темиçе май та пулĕ. Апла пулсан алă усса ан ларăр. Пуçлăхăр эсир еплерех ĕçленине тимлĕ сăнать, тишкерет. Вăл унпа кăмăллă. Анчах ĕçтешĕре те пысăк хак парать. Çавăнпа ăна хăвăрăн вырăна йышăнма май ан парăр. Нерв тытăмне сиплеме питĕ йывăр – хăвăра алăра тытăр.

**Скорпион.** Шел те, палăртса хунине тĕпĕ-йĕрĕпех пурнăçа кĕртме май килмĕ. Çавăнпа çак кунсенче тăвайман ĕçсем пирки шухăшласа вăхăта сая ан ярăр, сывлăхăра ан хавшатăр. Ĕçтешĕрпе ан тавлашăр. Юратнă çыннăра çухатас мар тесен каçарма вĕренĕр. Канмалли кунсене çывăх çыннăрсемпе ирттерĕр.

**Ухăçă.** Лăпланăр. Пĕр харăс темиçе ĕçе пуçăнса кăмăлăра хуçмалли сăлтав ан шырăр. Ĕçре лару-тăру çăмăл мар пулин те унти пăтăрмахсене киле илсе ан кайăр. Мăшăрăрпа /савнийĕрпе/ лăпкăн хутшăнăр. Хăвăршăн, çывăх çыннăрсемшĕн хыт кукарланни усса каймĕ. Вар-хырăм ĕç-хĕлне лайăхлатма тĕрĕс апатланăр.

**Ту качаки.** Ĕçре пулăшу кирлĕ-и? Çывăх тусăртан пĕр иккĕленмесĕрех сĕнӳ-канаш ыйтăр. Юратнă çыннăрпа харкашасран сыхланăр – чĕлхĕре ирĕке яни каярахпа йывăрлăхсем кăларса тăратĕ. Юлташăрсем шăмат кун уява чĕнеççĕ-и? Турткалашса ан тăрăр, вĕсемпе хутшăнса кăмăлăра çĕклĕр.

**Шыв тăкан.** Пĕр ĕç ăнманшăн пĕтĕм тĕнчене кӳренсе çӳремелле-им вара? Лăпланăр. Пуçлăх хушнă ытти ĕçе тĕплĕ тума тăрăшăр. Кăмăлăра лайăхлатма кинотеатра çитсе килни е концерт кайса курни пулăшĕ. Канмалли кунсене юратнă çыннăрпа ирттерĕр. Çав тĕл пулура ĕç пирки пачах ан шухăшлăр.

**Пулăсем.** Ку яхăнта питĕре маска ан тăхăнăр. Ыйтсан – мĕнле пур çапла хуравлăр. Кирек епле пулăм пирки те шухăшăра пĕр иккĕленмесĕрех калăр. Каççерен, канмалли кунсенче усă сывлăшпа киленме май тупăр. Савнийĕре /мăшăрăра/ кĕтмен парнепе савăнтарса кăмăлне уçăр.

# Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 11.10 | + 12 | + 7 |
| 12.10 | + 12 | + 9 |
| 13.10 | + 10 | + 8 |
| 14.10 | + 7 | + 4 |
| 15.10 | + 6 | + 2 |
| 16.10 | + 3 | - 1 |
| 17.10 | + 9 | + 2 |


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çуртĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕ:
Йĕпреç – /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 10.10.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8598. Заказ 3882.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.